Республика кунĕ çитнĕ май

# Пĕлтĕр Республика кунĕ Муркашра пулни асăмăрта ырă йĕр хăварнине часах манма çук












Паянхи пурнăç ыйтăвĕсем

# Хамăршăн хамăрăнах тăрăшас пулать

Ял çыннисен ĕнисен кĕтĕвне кĕтме тиврĕ. Çавна май манăн хамăн шухăшсене хаçат вулакансене пĕлтерес кăмăл çуралчĕ. Эпĕ – Раççей çынни, Чăваш Республикинче пурăннă çын. Шăпа вара мана Урала, Свердловск облаçĕнчи Краснотурьинск хулине илсе çитерчĕ. Унта эпĕ 40 çул ытла аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче вĕрентрĕм. Çапах та кашни çул тенĕ пекех хамăн тăван тăрăха, тĕрĕсрех каласан, Муркаша килсе кайма тăрăшатăп.

Кунти илемлĕх такама та тыткăна илет темелле. Акă эпĕ асфальт сарнă Йӳçкасси – Муркаш çулпа çуранах таврăнатăп. Автомашинăсем вирхĕнсе кăна иртсе каяççĕ. Тавралăх та илемлĕ, цивилизаци те палăрать: электропередача линийĕсем, симĕс вăрмансем, уй-хирсемпе çарансем, çуртсен илемлĕ çивиттийĕсем...

Анчах та манăн лайăххи пирки кăна калас килмест. Цивилизацин тӳнтер енĕсем те курăнмаççĕ мар-ха хальлĕхе. Енесене кĕтсе çӳренĕ çарансенче хальхи вăхăтра пластмасса е кантăк кĕленчесем, пакетсем тата ытти ăпăр-тапăр сахал мар йăваланса выртать. Тавралăха кун пекех варалама кирлĕши?

Тата мана çакă шухăша ячĕ. Хальхи вăхăтра çулсемпе йĕркеллĕ çӳрес вырăнне акнă калчасене таптаса çӳрекен водительсем те сахал мар. Çĕр ĕçченĕн ĕçĕ çине сурни пулмасть-и-ха вара çакă? Унта та кунта автомашинăсемпе уй тăрăх çӳренĕ вырăнсем пур. Çавăн пек «водительсене» ниепле те ăнланма пултараймастăп: çак лаптăксене сухалама, çĕрне хатĕрлеме, акма-лартма, вăрлăхпа удобренисем валли сахал мар укçа-тенкĕ тăкакланă вĕт-ха. Уйра акнă лаптăксем тăрăх çӳрекен водитель çакăнта ĕçленĕ çынсен вăйĕпе туса илнĕ çăкăрах çиет вĕт-ха. Хăйсем çакна ăнланмаççĕ пулсан, кун пек пуçтахсем тĕлĕшпе район шайĕнче те пулсан çирĕпрех мерăсем йышăнмалла пуль. Сăмах май каласан, кун пек тĕслĕхсем пирĕн районта кăна мар, республикăри ытти районсенче те тĕл пулаççĕ.

Юхăнса пыни ытти енĕпе те палăрать. Сăмахран Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн хăмла плантацинех илер. Ку плантацие тума укçа-тенкĕ сахал мар тăкакланă. Халĕ кунта пĕтĕмпех юхăнса выртать. Çак ĕçе çĕнĕрен йĕркелес шухăшлисем çук-ши вара?

Муркаш тăрăх автомашинăсем епле май килнĕ çавăн пек çӳренĕ тĕслĕх пирки те асăнмалла. Нимĕнле йĕрке те çук. Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсем вара районти шалти ĕçсен пайĕ умĕнче кăна дежурствăра тăраççĕ.

Çапла, çитменлĕхсем çук мар. Вĕсене пĕрлехи вăйпа кăна пĕтерме пулать.

**В. МАСТЕРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**

Республика фестивалĕн финалĕ

# «Çеçпĕл кăвайчĕ–2009»

Кăçалхи çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Çеçпĕл ялĕнче ача-пăча поэзийĕн «Çеçпĕл кăвайчĕ–2009» республика фестивалĕ иртнĕ. Унта пирĕн районти шкулсенче вĕренекенсем тăваттăн хутшăннă. Кусем вĕсем Юнкă шкулĕнчи Татьяна Орлова, Турай шкулĕнчи Анна Салтыковапа Кристина Бычкова, Муркаш шкулĕнчи Елена Филиппова.

Тăватă номинацире вăй висçнĕ ăмăртăвăн икĕ тапхăрĕнче палăрнă вĕренекенсем. Кашни номинацирех çĕнтерӳçĕсене палăртнă. «Чи лайăх сăвă авторĕ» номинацире Турай шкулĕнчи тăваттăмĕш класра вĕренекен Кристина Бычкова 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă.

**Хамăр инф.**

Шăпа

# Пуçне усмасть кинемей

Иртнĕ ĕмĕрĕн 10–20-мĕш çулĕсенче çуралнисене йывăр шăпаллисем шутне кĕртетпĕр. Ачалăхра вĕсен вăрçă тертне чăтса ирттерме тивнĕ, выçлăх тути-масине те тутанса курнă. Апла пулин те вĕсем пуçĕсене усман, кăмăл-туйăмпа хытман. Халĕ те хастар та маттур.

Тушкасси ялĕнче пурăнакан Елена Григорьеван та кун-çулĕ çăмăл пулман. Вăл 1919 çулта Етĕрне районĕнчи Ишекасси ялĕнче çуралнă. Пĕчĕк Лена ашшĕне курайман. Вăл граждан вăрçине кайнă та – каялла таврăнайман. Çак кунсенче вара вăл хăйĕн юбилейне паллă турĕ.

Хĕр ача çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче аслисемпе пĕрле уй-хирте ĕçленĕ, вăрман каснă, окопсем чавнă, Етĕрне кĕперне тунă çĕрте ырми-канми ĕçленĕ. Пĕр ĕçрен те ютшăнман, йывăр пулсан та тӳснĕ.

Елена Яковлевна Тушкассинчи пуçламăш шкулта 4 класс вĕренсе пĕтернĕ. Самани йывăр пулнă май малалла вĕренеймен. 1947 çулта çар енĕпе ĕçлекен качăпа çемье çавăрнă, 2 ача çуратса пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Тĕпренчĕкĕсем тахçанах амăшĕн çуначĕ айĕнчен вĕçсе тухса çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче тĕпленнĕ. Кашниех çемье çавăрнă, ача-пăчаллă пулнă. Шел пулин те, Елена Яковлевнан мăшăрĕпе Саша ывăлĕ пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайрĕç.



Елена Яковлевна офицер мăшăрĕ пулса Тăван çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенче пулса курнă: Амур облаçĕнче, Беларуç çĕрĕ çинче...

Яла таврăнсан библиотекăра техслужащи пулса чылай ĕçленĕ, колхозра та ырми-канми вăй хунă.

Ĕçре хастар та пултаруллă пулнăшăн ăна сахал мар Тав хучĕсемпе, парнесемпе чысланă. Кирек епле ĕçе те тирпейлĕ, чунтан пурнăçланă вăл. Çавăнпах ĕнтĕ Суворов яч. хис. хуçалăх ертӳçи В.С. Андреев ăна юбилей ячĕпе хаклă парне парса чысларĕ, сывлăхлă пулма тата канлĕ ватлăх сунчĕ. Çавăн пекех саламлама Анаткассинчи пуçламăш шкул ачисем, вĕсен вĕрентекенĕ Г.Н. Трофимова, баянпа калакан Г.И. Албутова, культура ĕçченĕсем Г.П. Андреева, Р.И. Григорьева, ветерансен канашĕн ертӳçи К.К. Корнилов хутшăнчĕç. Ачасем кинемее юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

90 çул тултарнă кинемей Люба хĕрĕпе пурăнать. Унăн хальхи вăхăтра 4 мăнук тата 1 прамăнук. Тăванĕсем ун патне тăтăшах пырса çӳреççĕ, хăйсен ырăлăхĕпе ăна савăнтарма манмаççĕ.

**Г. АНДРЕЕВА,**
**Анаткасси ялĕнчи библиотека заведующийĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Елена Григорьева хăйĕн йышлă тăванĕсемпе.**

2009 çул – Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

# Çерем çĕрсене уçма хутшăннă

Манăн хамăн асатте Эдуард Николаевич Николаев пирки каласа парас килет. Вăл 1938 çулта хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ Николай Михайлович «Пучах» колхозра трактористра ĕçленĕ. Çарта пулнă. Ленинград фронтĕнчен инвалид пулса таврăннă. Асанне колхозра вăй хунă.

Асатте нумай ачаллă çемьере ӳссе çитĕннĕ. Унсăр пуçне татах 7 ача пулнă. Вăл иккĕмĕш ача пулнă.

1957 çулта Етĕрнери ял хуçалăх механизацийĕн училищине вĕренме кĕнĕ. Механик-комбайнер пулса тăнă. Училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн ытти механизаторсемпе пĕрле Çурçĕр Казахстанри Кокчетавски облаçри çерем çĕрсене çĕклес ĕçе хутшăннă. Унтан таврăнсан тăван хуçалăхра ĕçлеме тытăннă.

1960–1961 çулсенче Советскинчи профессипе техника училищинче вĕреннĕ, анлă профильлĕ тракторист тата виççĕмĕш разрядлă слесарĕн специальноçне алла илнĕ.

1967 çулта Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне заочно майпа «механизаци» специальноçĕпе вĕренсе пĕтернĕ. Техник-механик квалификацине илнĕ. Асатте вĕреннипе пĕрлех ĕç пирки те манман, 1964 çултан тытăнса механикра тăрăшнă, вырма вăхăтĕнче вара – комбайнерта.

1964 çулта вăл пĕр ялта пурăнакан, Турайри участок больницинче санитаркăра ĕçлекен Клавдия Михайловна Михайловапа пĕрлешсе çемье чăмăртанă. Висçĕ ача пăхса çитĕнтерсе ура çине тăратнă.

Манăн асатте изобретатель-рационализатор та пулнă. Унăн çĕнĕлĕхĕсемпе ял хуçалăх производствинче усă курнă. Çавăншăнах вăл 1979 çулта Чăваш АССР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ.

1993 çулччен Эдуард Николаевич Киров яч. хис. хуçалăхăн тĕп инженерĕнче тăрăшнă, 1993–1997 çулсенче мастерской заведующийĕ пулнă. Вырма вăхăтĕнче вара яланах комбайн штурвалĕ умне ларнă, вĕçĕмех малти вырăнсене тивĕçнĕ.

Асатте хăй çерем çĕрсене уçнă вăхăта интересленсе каласа парать. Етĕрнери механизаци училищине вĕренсе пĕтерсен вĕсене – республикăран 150 çамрăка – Казахстана Кокчетав облаçне ăсатнă. Кунтах Украинăран 200 çынна яхăн килсе çитнĕ. Çав кунах савăнăçлă митинг пулнă. Митинг хыççăн вĕсене Первомайски районĕнчи «Краснознаменский» совхоза янă. Ку совхоза 1956 çулта çĕнĕ вырăнта пушхирте йĕркеленĕ пулнă.

Асаттене ытти механизаторсемпе пĕрле 4-мĕш бригадăна çирĕплетсе панă. Вăл совхоз центрĕнчен 30 километрта пулнă. Кунта вĕсем пĕрремĕш хут çĕр пӳртсем, вагонеткăсем курнă. Кунтах пĕчĕк мастерскойсем, столовăй, клуб туса лартнă пулнă.

Ĕçме шыв пулман. Çавăнпа та çĕре сирпĕтсе 25-50 метр сарлакăш икĕ котлован тунă. Пĕринчен ĕçме таса шыв илнĕ, тепринчипе çăвăннă.

Вĕсен бригадин планпа 35 пин гектар ытла çĕре сухаласа пăрахмалла пулнă. Пĕр пайне унччен сухаласа акнă пулнă ĕнтĕ. Унта ăна ДТ-54 трактор çирĕплетсе панă. Ун чухне ДТ-54 тата С-80 тракторсем чи лайăххисем шутланнă.



Ĕçлеме çăмăл пулман. Çĕрĕ чуллă тата хытă пулнă. Техника та тăтăшах ваннă. Сухаланă хыççăн та çĕре культиваторсемпе çемçетме май килмен. Унччен чукун çул пăрăхĕсене сĕтĕрсе тăпра муклашкисене ватнă.

Тыр-пул пухса кĕртес ĕçсене те хутшăннă вăл. С-6 комбайнпа вăй хунă. Юр çума тытăниччченех тăрăшнă, хирте тырă вырмасăр хăварман.

Унтанпа 40 çул ытла иртнĕ ĕнтĕ. Апла пулин те асатте çав çулсене хаваспах аса илет. Вĕсем ĕмĕрĕпех унăн асĕнче. Вĕсем – унăн çамрăклăх çулĕсем.

**Е. ХРИСАНОВА,**
**Турай шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренекен.**